ХЫПАР

# КИЛ-ÇУРТ, ХУШМА ХУÇАЛĂХ

1999 çулхи июлĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

34 (831) №, 2015, август/çурла, 27 Хакĕ ирĕклĕ

12+

## ШУПАШКАРТИ ТĔП ПАСАРТИ ХАКСЕМ

/августăн 26-мĕшĕ тĕлне/

**ПАХЧАÇИМĔÇ**

| *Килограмм* | *тенкĕ* |
|---|---|
| Çĕрулми | 15-18 |
| Купăста | 15 |
| Сухан | 25-30 |
| Кишĕр | 25-30 |
| Ыхра | 120-150 |
| Хăяр | 25-40 |
| Кабачок | 15-20 |
| Хĕрлĕ кăшман | 30 |
| Помидор | 25-50 |
| Пылак пăрăç | 30-70 |
| Тăварланă хăяр | 100 |
| Йӳçĕтнĕ купăста | 100 |
| Баклажан | 30-40 |
| Сар кăмпа /лисички/ | 150 |

**УЛМА-ÇЫРЛА**

| | |
|---|---|
| Панулми | 25-70 |
| Иçĕм çырли | 50-120 |
| Апельсин | 85-100 |
| Лимон | 110-140 |
| Банан | 30-45 |
| Мандарин | 70-100 |
| Слива | 60-75 |
| Абрикос | 80-110 |
| Нектарин | 85-100 |
| Персик | 75-85 |
| Груша | 60-120 |
| Дыня | 28-35 |
| Арпус | 10-12 |
| Хура çырла | 180 |
| Сырлан | 100 |

**ÇĂНĂХ-КĔРПЕ**

| | |
|---|---|
| Тулă çăнăхĕ | 25 |
| Вир кĕрпи | 35 |
| Хура тул -»- | 59-62 |
| Тулă -»- | 19 |
| Манна -»- | 32 |

* * *

| | |
|---|---|
| Сахăр песукĕ | 50 |
| Пыл | 400-450 |

**АШ-КАКАЙ**

| | |
|---|---|
| Ĕне ашĕ | 200-350 |
| Сысна ашĕ | 200-350 |
| Сурăх ашĕ | 200-280 |
| Пĕвер | 100-180 |
| Пӳре | 60-80 |
| Чăх | 200-250 |
| Салă | 120-180 |

* * *

| | |
|---|---|
| Çăмарта /теçетке/ | 45-58 |

**ПУЛĂ**

| | |
|---|---|
| Шăнтнă скумбри | 200 |
| -»- сельдь | 150 |
| Мойва | 160 |
| Треска | 250 |
| Шăла пулă /судак/ | 150-200 |
| Çупах /лещ/ | 70-100 |
| Карп | 200 |
| Çуйăн /сом/ | 220-300 |

**СĔТ-ТУРĂХ**

| | |
|---|---|
| Сĕт /литр/ | 28-30 |
| Хăйма | 100 |
| Тăпăрч | 170-180 |
| Сыр | 200-280 |
| Услам çу | 180 |



## Вăрмана – кăмпана

Ăста кăмпаçăсем çуркуннерен пуçласа мĕн хĕллеччченех кăмпана çӳреççĕ. Çуркуннехи кăмпасем – ака кăмпи, кăтра кăмпа. Çуллахи вăхăтра – сыроежка, çуллă кăмпа, хурăн кăмпи. Тунката кăмпипе сар кăмпа, кăрăç вара кĕр еннелле савăнтараççĕ. Лайăх кăмпаçă ăçта, хăçан тата кăмпана мĕнлерех пуçтармаллине аван пĕлет-тĕк, пуçласа çӳрекенĕн нумай вăрттăнлăха уçма тивет. Мĕншĕн кăмпа чылайăшне килĕшет-ха? Кăмпана çӳресси çутçанталăк ытамĕнче уçă сывлăшпа киленесси çеç мар. Чи малтанах кăмпаçă тутлă, усăллă çимĕç пуçтарса çемьене апат-çимĕçпе тивĕçтерет, укçа-тенке перекетлет. Вăрманта кăмпа пуçтарнăшăн никама та тӳлемелле мар. Вăхăт вара, паллах, иртет. Çутçанталăк илемĕпе киленни те, кăмăл çĕкленни те, паллах, пĕлтерĕшлĕ. Пурак-карçинкка кăмпапа тулсан – пушшех те. Ăнсассăн кăмпаçă хĕл каçмалăх кăмпа хатĕрлеме пултарать. Ăна тăварлама, маринадлама, типĕтме, шăнтса хума пулать.

Кăмпана час-часах какайпа танлаштараççĕ. Тытăмĕпе вăл аша çывăх. Унта белок, углевод, çу, тĕрлĕ витаминсемпе минералсем нумай.

Кăмпапа чи пуян вăхăт – август-сентябрь. Тĕрлĕ-тĕрлĕ кăмпа тапса тухать ку тапхăрта. Сентябрь вĕçнелле çанталăк сивĕтнĕçемĕн кăмпа ӳсесси вăрахланать, йышĕ сахалланать. Кăмпа пуçтармалли тапхăр паллах çутçанталăк условийĕсенчен те килет. Хăшпĕр çул кăмпа иртерех тухать, хăшпĕр çул – каярах.

Кăмпа пуçтарнă чухнехи тĕп йĕрке – лайăх пĕлеккеннисене çеç пуçтармалла. Ватăлнă, хуртлă кăмпана, промышленноç завочĕсем, автомагистральсем çывăхĕнче пуçтарма юрамасть.

Наркăмăшлисене çимелли кăмпасенчен ентлерех уйăрса илмелле-ха? Чи малтанах кăмпасемпе паллаштаракан справочниксене тĕпчемелле. Пуçласа кăмпана çӳрекенĕн ăста кăмпаçăсемпе пĕрле çӳремелле. Иккĕленӳллĕ кăмпасене татса тӳрех карçинккана хума юрамасть, малтан пĕлекене кăтартмалла.

Кăмпана каяканăн пекĕ, карçинкка илмелле. Рюкзакра, полиэтилен хутаçра кăмпа ванать, тасатасси, ăна ĕçе кĕртесси йывăрланать. Паллах, тумтир пирки те манмалла мар. Вăл питĕ тата çăмăл пултăр.

Татнă кăмпана тăпраран, лăсă-çулçăран тасатмалла, туни сĕре тăпраллă пулсан касмалла. Карçинккана кăмпана шĕлепкипе аялалла туса хумалла – вара вăл тĕпренмĕ.

Кăмпана çĕртен туртса кăлармалла мар. Кăштах тунине çĕр çумне хăварса çĕçĕпе касмалла. Вăл кăмпана малашне ĕрчеме май парать.

Татнă кăмпа хуртлă, аван мар шăршăллă пулсан ан илĕр. Унта наркăмăш пуçтарăнать.

Августра йышлă тухакан кăмпасем: шурă кăмпа, хурăн кăмпи, çерем кăмпи, така кăмпи, сар кăмпа, çуллă кăмпа /масленок/, тунката кăмпи, кăрăç, хыр кăмпи /рыжик/, кăвак кăмпа, çемçе кăмпа /валуй/, мăк кăмпи /моховик/.

Кăмпаран тĕрлĕ тутлă апат хатĕрлеме пулать. Хăна-вĕрле килсессĕн те сĕтел çинче вырăн тупатех вăл. Кăмпа хатĕрлесси çинчен тепĕр номерте пичетлĕпĕр.

## Духовка тасатар-ха

**Кашни хуçа килĕнче тирпейлĕх, тасалăх пулнине юратать. Тĕпелте – пушшех те. Вăл кил хуçи хĕрарăмне хакламалли виçе çеç мар, апат-çимĕç хатĕрлемелли лаптăк та. Эппин, кухньăра тасалăх кирлех. Анчах духовка – пичке пыла варалакан тикĕт тейĕн. Унăн стенисем, алăкĕ çине çыпăçнă апат-çимĕç çунăкне тасатасси ай-вай йывăр.**

Телее, хальхи вăхăтра савăт-сапа çумалли, раковина, килти техникăна тасатмалли япала нумай. Çавăн пекех халăх усă куракан пĕр витĕмлĕ рецепт сĕнетпĕр.

Кирлĕ пулать: чĕрĕк стакан чустана кăпăшлантаракан /разрыхлитель/ порошок, 250 мл нашатырь спирчĕ, 1 литр вĕрекен шыв, вĕри шыв валли икĕ пĕчĕк савăт.

**Духовка алăкĕн кантăкне çăватпăр.** Чуста кăпăшлантармаллине хăйма пек пуличчен шыв хушмалла та кантăка сĕрмелле. Çур сехетрен нӳрлĕ пусмапа сăтăрса тасататпăр – духовка алăкĕ тасалса йăлтăртатать.

**Духовкăн ăшне тасататпăр.** Ку ĕçе каçхине тусан лайăхрах. Духовкăри хытса ларнă вараланчăка лайăх çемĕçтерме вăхăт кирлĕ. Малтан духовкăна 150 градуса çити хĕртетпĕр, сӳнтеретпĕр. Унтан вĕрине чăтакан савăта вĕрекен шыв яратпăр, духовкăн аялти пайне лартатпăр. Тепĕр савăта 1 стакан нашатырь спирчĕ яратпăр та вĕри шывран çӳлерех противень çине лартатпăр. Духовкăна хупатпăр та çĕр каçа хăваратпăр. Ирхине духовкăри нашатырь спиртне савăт-сапа çумалли шĕвек хушатпăр, хытăрах пусмапа е губкăпа духовкăна тасататпăр.

Духовка çĕнĕ чухнехи пек йăлтăртатса ĕçлекене савăнтарĕ. Ĕçĕ вара хăйне кура мар ансат: ăслай пулсан вăхăт та, вăй та, укçа та перекетленет.

## Хамăрăн панулмирен – уксус

Панулми ăнса пулчĕ-и? Панулми уксусĕ хатĕрлеме сĕнетпĕр. Организма вăл шлаксенчен тасатать, иммунитета çирĕплетет, юнри холестерин шайне чакарать.

Кĕленче савăта тин хатĕрленĕ 1 литр панулми сĕткенĕ ямалла, 100 грамм сахăр е пыл, 10 грамм çĕпре хушмалла. Марльăпа хупламалла та 10 куна ăшă вырăна, хĕвел лекмен çĕре, лартмалла. Ун хыççăн сăрăхтармалла, марльăпа хупламалла, тепĕр 2 уйăх ăшă вырăнта упрамалла. Шĕвек çуталсан, хăмпăсем çухалсан уксус хатĕр пулать. Ăна çутă лекмен тĕттĕм вырăна лартмалла.

## Кĕскен

Августăн 29-мĕшне мотоциклăн çуралнă кунĕ тесе палăртма пулать. Шăпах çак кун нимĕç инженерĕ Готлиб Даймпер хăй ăсталанă «машинине» кăтартма тата хатĕрлеме патент илнĕ. Унăн мотоциклĕ рама çумне çирĕплетнĕ двигательлĕ велосипед пек пулнă. Вăл ăна «Керосин двигателĕллĕ ларса çӳремелли урапа» ятпа патентланă. Германире мотоциклсене çав вăхăтран туса кăларма пуçланă.

Раççейре мотоцикл туса кăларас ĕçе XX ĕмĕр пуçламăшĕнче хута янă.

## Усăллă канашсем

◆ Сивĕтмĕше упрама хуриччен аша çумаççĕ. Какая пăр çине те хумаççĕ – ирĕлтерсен унăн тути улшăнать.

◆ Шăн селедка хăвăртрах ирĕлтĕр тесен ăна сивĕ шыва хумалла /1 килограмм пулла 2 литр шыва/. Унта 2 кашăк тăвар хушмалла, çапла майпа шыва тутлăхлă япаласем сахалрах куçаççĕ.

◆ Рис пăттине сĕтпе пĕçернĕ чухне сахăра тӳрех яма кирлĕ мар – рис япăх пиçет. Вĕренĕ шыв кăштах илсе сахăра ирĕлтермелле, пăтă пиçсен хушмалла.

## Кун мĕнпе паллă

**Август, 27** – Раççей кино кунĕ.

**Август, 28** – Успени уявĕ.

**Август, 29** – Раççей спецназĕн кунĕ. Мотоцикл кăларассине патентланă кун.

**Август, 30** – Хусан хули кунĕ /1010 çул/.

**Август, 31** – Ветеринар кунĕ.

**Сентябрь, 1** – Пĕлӳ кунĕ, çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланать.

**Сентябрь, 2** – Раççей гвардийĕн кунĕ.

# Нӳхреп хатӗрлетпӗр

Пăхса ӳстернӗ çӗрулмипе тымар çимӗçсене упрама часах нӳхрепе хумалла. Вӗсем хӗлле лайăх упранччăр тесен ăна лайăх хатӗрлемелле. Кашни çул пуçтарса илнӗ çӗнӗ продукцине хурас умӗн салатса пухмалли пӳлмесене тата çӳлӗксене, вырăнтан вырăна куçармалли щитсене нӳхрепрен илсе тухса, хӗвел çинче типӗтмелле, кирлӗ пулсан юсамалла. Унтан вӗсене кальци е каустика содипе çуса тасатмалла. Тимӗр çӳлӗксене тата йывăç çӳлӗксене çирӗплетнӗ тимӗр хатӗрсене тутăхасран çуллă сăрăпа витмелле. Нӳхрепе тăпраран, çӳп-çапран тата çӗрекен çимӗçрен тасатмалла, лайăх типӗтмелле, кирлӗ пулсан юсамалла.

Уçăлтармалли пăрăхсене, алăксемпе люксене тӗрӗслемелле, юсамалла. Уçăлтармалли пăрăхсене юсас ӗçе кая хăвармалла мар. Вӗсене вăхăтра тумасан упрама хунă продукци шăнма пултарать.

Кăшлакан чӗрчунсем çӳрекен шăтăксене питӗрмелле, вӗсен йăвисене кирпӗч ванчăкӗпе хупламалла, сывлăш кӗртмелли пăрăх çине тимӗр сетка вырнаçтармалла.

Çӗнӗ е кивӗ нӳхрепе продукцие упрама хуриччен пӗр уйăх маларах стенасене, маччана тата уçăлтармалли пăрăхсене дезинфекцилеççӗ.

Дезинфекцин тӗп тӗллевӗ – ятарлă хатӗрсемпе çӗрулмине тата тымар çимӗçсене чир-чӗртен сыхласси, çавăн пекех йывăç япаласене сиен тăвакансене пӗтересси.

Дезинфекцие шывра ирӗлтернӗ тӗрлӗ ирӗлчӗксемпе тăваççӗ. Тӗслӗхрен, 1-2 процентлă ешӗл сенкер /медный купорос/ 10 л шыва; 100-200 г ешӗл сенкер е 1 процентлă формалин ирӗлчӗкӗ /10 л шыва 100 г формалин/ е тин сӳнтернӗ извеç ирӗлчӗкӗ /1 витре шыва 2-2,5 кг извеç/.

Чылай чухне дезинфекци тумалли ирӗлчӗке извеç тата ешӗл сенкер хутăшӗнчен хатӗрлеççӗ. Ешӗл сенкере малтан вӗри шывра ирӗлтереççӗ. Унтан ăна извеç чустипе хутăштараççӗ, кирлӗ пулсан шыв хушса шӗветеççӗ. 0,3-0,4 л ирӗлчӗкпе 1 тăваткал метр лаптăка сирпӗтме пулать. Ку ӗçре сирпӗтмелли хатӗрсемпе усă курмалла.

Нӳхрепе шӗвекпе сирпӗтнӗ хыççăн алăка, люка, уçăлтармалли пăрăхсене хупса хураççӗ те икӗ талăк уçмаççӗ. Ун хыççăн нӳхрепе лайăх уçăлтармалла.

Дезинфекци тунă чухне хăрушсăрлăх техникин правилисене пăхăнмалла.

Нӳхрепре кăшлакан чӗрчунсем ӗрчесе кайнă пулсан вӗсене пӗтерме наркăмăшсем хураççӗ е кӳкӗртпе сӗрӗмлентереççӗ. 1 кубометрта 30-50 г кӳкӗрт /сера/ çунтармалла. Сӗрӗмлентернӗ чухне пушар тухассинчен сыхланмалли тата санитари правилисене пăхăнмалла, мӗншӗн тесен шӗвӗ кӳкӗрт çулăмпа çунать, унран наркăмăшлă газ тухать. Çавăнпа нӳхрепе противогазпа çеç кӗмелле.

Нӳхрепе продукцие упрама хуриччен вырăнтан вырăна куçармалли щитсене, салатса пухмалли пӳлмесене тата çӳлӗксене илсе кӗмелле, хăйсен вырăнӗсене вырнаçтармалла, йăванса тӳнесрен лайăх çирӗплетмелле.

**Василий ИВАНОВ,**
**инженер-строитель.**

# Кирлӗ пулӗ

● Йывăç япала çине пăрса лартнă шурупа кăларма йывăр пулсан çак меслет пулăшма пултарать. Шурупа хӗртсе илӗр. Вӗриленнипе шуруп сарăлать, сивӗнсен – пӗрӗнет. Сивӗннӗ хыççăн шурупа кăларма çăмăлрах.

● Шурупа хытă çӗре пăрса кӗртмелле пулсан малтан çав тӗле пăшатанпа кăштах шăтăк тăвăр. Çав вырăна супăнь хырса тултарăр. Шуруп çăмăлраххăн кӗрӗ.




## ÇАНТАЛĂК

| | кăнтăрла | çӗрле |
|---|---|---|
| 27.08 | + 22 | + 16 |
| 28.08 | + 17 | + 12 |
| 29.08 | + 16 | + 14 |
| 30.08 | + 9 | + 8 |
| 31.08 | + 12 | + 9 |
| 01.09 | + 11 | + 8 |
| 02.09 | + 15 | + 10 |

## КУН ТĂРШШӖ

| | Кун тăршшӗ | Уйăх кунӗ |
|---|---|---|
| 27.08 | 14.14 | 14 у.к. |
| 28.08 | 14.10 | 15 у.к. |
| 29.08 | 14.05 | тулли уйăх |
| 30.08 | 14.01 | 17 у.к. |
| 31.08 | 13.56 | 18 у.к. |
| 01.09 | 13.51 | 19 у.к. |
| 02.09 | 13.47 | 20 у.к. |

Кун тăршшӗ 13 сехет те 47 минут, 3 сехет те 37 минут кӗскелет. Августăн 30-мӗшӗнчен кивӗ уйăх, катăлма пуçлать.

## Чечек пахчинче

# Георгин, гладиолус...



Гладиолуспа георгин нумай çул ӳсекен чечексем шутланаççӗ пулин те пирӗн тăрăхра хӗл каçаймаççӗ – шăнаççӗ. Вӗсен тымарӗсене кӗркунне кăларса нӳхрепре упрамалла.

Гладиолуса октябрь уйăхӗнче кăлармалла. Чечек çурса тăкнă хыççăн вăл тымара тутлăхлă япаласем пуçтарма тытăнать. Çак тапхăр 35 куна яхăн. Унтан гладиолуса кăларма юрать. Типӗ çанталăкра тунаран тытса кӗреçепе хирмелле. Кăларнă чечек тунине суханӗнчен 3 см çӳллӗшӗнчен тӳрех касмалла. Унсăрăн гладиолус çулçисем тымартан сӗткене туртса илеççӗ. Сухана тăпраран тасатмалла, çумăр лекмен çӗре хурса пӗр-икӗ эрне типӗтмелле. Типӗтнӗ сухана суйламалла, çӗрӗк чирӗ ересрен тивӗçлӗ препаратсемпе çумалла. Марганцовкăн вăйсăр шӗвекӗ, бор йӳçекӗ юрать. Тасатнă сухана типӗтмелле те туна вӗçне касса пăрахмалла, картун ешчӗке çӳхен сарса упрама хумалла. Тӗрлӗ чир-чӗртен хӳтӗлеме пӗр икӗ шăл тасатнă ыхра хума юрать.

Георгинăна пӗрремӗш сивӗсем пуçлансан кăлармалла: сентябрь вӗçӗ-октябрь пуçламăшӗ. Кӗр сивӗ пулсан кăлариччен георгин тӗмне витсе хӳтӗлемелле. Кăларас ӗç йӗрки: тунана касмалла, кӗреçепе асăрханса чавмалла, тăпраран тасатмалла, таса



шывпа çумалла та 4-5 кун типӗтмелле. Çак вăхăтра тымарсем хулăнланаççӗ. Унтан тымара лайăх тӗрӗслемелле, сиенленнисене иртмелле. Георгинăн тӗрлӗ сортне палăртса çырмалла /фломастерпа тымарсем çинех çырма юрать/, уйрăмшарăн торф тултарнă хутаçа е ешчӗксене хурса нӳхрепре е тӗпсакайӗнче упрамалла. Хӗл каçма вӗсене +4... +5 градус, тата тӗттӗм пулни юрăхлă.

## Ашшӗ-амăшӗ валли

# Шкула кайма хатӗр-и?

**Ачана шкула кайма хатӗрлемеллине ашшӗ-амăшӗ ăнланать, паллах. Ачана вулама, çырма хăнăхтарма тăрăшаççӗ çитӗннисем. Вулама тата çырма вӗреннисӗр пуçне шкулта ытти нумай çӗнӗлӗх кӗтет пӗчӗкскере. Вăл мӗнле вӗренесси шкул пурнăçне мӗнле хăнăхнинчен те, ачасемпе хутшăнассине тӗрӗс йӗркеленинчен те нумай килет. Ача питӗ хăюсăр пулсан ăна психолог е ашшӗ-амăшӗн пулăшăвӗ кирлех.**

Психологсемпе физиологсем ача шкула каймалăх «пиçсе çитнине» тӗрлӗ енлӗн палăртаççӗ: ăс-тăн аталанăвӗ, хăйтӗллӗнлӗх тата психика аталанăвӗ.

Ăс-тăнпа «пиçнине» ачан шухăшӗ /логика/ епле аталаннипе, каланине итлеме пултарнипе, астуса юлнине каласа кăтартма пӗлнипе палăртаççӗ.

Ача ют вырăна мӗнле хăнăхнине, ачасемпе епле хутшăннине, хăй мӗн тунине ăнланса, йӗркелесе пынине тишкерсе психологи тӗлӗшӗнчен шкул валли хатӗррине палăртаççӗ.

**Пӗрремӗш класа каякана мӗне вӗрентмелле?**

1. Хăйӗн хушаматне, ятне, миçе çултине, хăйӗн адресне, ашшӗ-амăшӗн ячӗсене.

2. Саспаллисене, цифрăсене, геометрин ансат фигурисене, хирӗçле ăнлава /сивӗ – ăшă, пысăк – пӗчӗк/.

3. Ачапа кӗнекесем вуламалла. Вуласа тухсан пӗрле сӳтсе явмалла. Ачана кăсăклантарса вуланине каласа пама вӗрентмелле.

4. Вуннăна çити шутлама, сыпăкпа вулама.

5. Алăна, пӳрнесене çырăва хăнăхтармалла – ӳкерме, конструктор е лего пуçтарма, пластилинран фигурăсем ăсталама май туса памалла.

6. Сăвă, юрă вӗренни те ачан ăс-тăнне аталантарать.

7. Ӳкерчӗксене тишкерсе унта мӗн курнине вăрăмах мар виçӗ-тăватă предложенипе каласа кăтартма вӗрентмелле.

8. Ачан хăйтӗллӗнлӗхне аталантармалла – тумланма, япаласене пуçтарма вӗрентмелле.

Ачан хăшпӗр енӗ вăйсăртарах пулсан та ятлама, хурлама юрамасть. Ăна кăсăклантарма тăрăшмалла. Вăл ăс пухма тытăнать çеç-ха. Ытларах мухтани, хавхалантарни кирлӗ. Шкулта вӗренни пысăк яваплăх, чи кирлӗ ӗç иккенне ашшӗ-амăшӗ те ӗненсе, ача ӗçне хисеплесе тăмалла. Ача валли ӗç кӗтесӗ уйăрмалла, кун йӗркине пăхăнса пурăнма хăнăхтармалла.

Мухтанă чухне ачана «Эсӗ – чи вăйли», «Эсӗ – чи ăсли» тесе мухтани йăнăш. «Ăслăскерӗм, эсӗ», «Тăрăшсан пултаратпăрах», «Эпӗ сана шанатăп» евӗр сăмахсемпе мухтамалла. «Чи» – танлаштару ăнлавӗ. Ачан яланах хăйне мӗнпе те пулин танлаштарас туйăм çирӗпленме пултарать.

Ача – ачах. Унăн выляс та килет. Юлташсемпе выляма, уçăлса çӳреме кун йӗркинче вăхăт палăртмаллах.

Ашшӗ-амăшӗ хăйӗн ачине тахамран та лайăхрах пӗлет. Ăна итлеме, кирлӗ пулсан пулăшма хатӗр пулăр, ялан тӗрев парăр. Вара кашни çулах сентябрӗн 1-мӗшӗ чăнчăн уяв, Пӗлӳ кунӗ пулӗ.

## Тӗпелте чухне

# Лечо

Помидорпа тата пылак пăрăçпа питӗ паха лечо хатӗрлеме пулать. Хамăр хатӗрленӗ лечо пире çуллахи ăшă кунсене аса илтерсе савăнтарӗ. Ăна ашкакай апачӗпе те, лапша-макаронпа та, çӗрулмипе те çиме аван.

**Лечо тума 2 кг пылак пăрăç, 2 кг хӗрелнӗ помидор, 1 чей кашăкӗ песук, 2-3 апат кашăкӗ тип çу, 1 апат кашăкӗ лимон сӗткенӗ кирлӗ, тăвар, пăрăç, ытти техӗмлӗхсем – тутине кура.**

Помидора çуса тасататпăр та мясорубкăпа авăртатпăр. Хуппине вистеме кирлӗ мар. Ăна кастрюле ярса çулăм çинче вӗреме кӗртетпӗр, 15 минут вӗрететпӗр. Пăрăça вăрринчен тасатса туратпăр, кастрюле хушса лайăх пăтрататпăр. Тăвар, хура пăрăç, ытти техӗмлӗхсене яратпăр, пăтратса тăрса тепӗр 25 минут вӗрететпӗр. Лечо пиçнӗ вăхăтра банкăсене стерилизацилесе хатӗрлетпӗр, хупăлчисене вӗрететпӗр. Юлашкинчен лечона лимон сӗткенӗ хушса 5 минут вӗрететпӗр те банкăсене тултарса хупатпăр, кутăн çавăрса лартса сивӗниччен тытатпăр. Сивӗннӗ хыççăн тӗттӗм çӗре лартатпăр. Пӳлӗмри температурăрах упрама юрать.

● Помидора 1 литр çăра томат пастипе ылмаштарма юрать.

# Кабачок икерчи

Кабачокран тӗрлӗрен тутлă апат хатӗрлеме пулать. Кабачок икерчи пӗçерсе пăхар-ха. Кабачок çамрăк та çемçе пулсан унăн хуппине шуратмалла мар. Çимӗç пысăкланнă, хытнă-тăк хуппине шуратмалла, вăррине кăлармалла.

**Кирлӗ пулать: 2 пӗчӗк кабачок, 2 çăмарта, 5 апат кашăкӗ шурă çăнăх, тутине кура тăвар, пăрăç, ăшаламалăх тип çу, ешӗл çимӗç.**

Ешӗл çимӗçе турамалла, кабачоксене вӗтӗ теркăпа хырмалла, икӗ çăмарта хушса пăтратмалла. Унтан çăнăх, тăвар, пăрăç хушса тепре пăтратмалла. Икерчӗ пӗçермелли чуста шӗвӗрех пулсан çăнăха ытларах хушма юрать.

Çатмана тип çу ярса хӗртетпӗр, чустана кашăкпа илсе хуратпăр, вăйсăртарах çулăм çинче икерчӗсен пичӗ ылтăн тӗслӗ пуличчен пӗçеретпӗр. Хăймапа çиме аван.



**95.ТРУБЫ ВИТЫЕ,** офактуренные; **кованые элементы** в ассортименте. Т. 8-927-844-15-01.

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ**
**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА**
**www.oknavdom21.ru**
Рассрочка, кредит. СКИДКИ - доп. пенсионерам
Замер, доставка по Чувашии БЕСПЛАТНО
АКЦИЯ! 7-ое окно в подарок и 4 потолок
**8 937 955-33-00 8 987 662-61-62**
АКЦИЯ: по ценам 2014 года!
окна по себестоимости для застройщиков

Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
**РЕКЛАМА ПĔЛТЕРӲ**
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пӳлĕм
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА**
**Изготовление в короткие сроки.**
Гарантия качества
Скидки до 30 %
**Тел. 89176594701.**

**КИРПИЧ**
**более 500 видов и цветов.**
**Газосиликатные блоки ТК «ТЕРМИНАЛ».**
ОПТОВЫЕ ЦЕНЫ
г. Чебоксары, Канашское шоссе, 7/1,
**тел. 30-55-15,**
г. Новочебоксарск, ул. Промышленная, 41,
**тел. 73-84-12.**

# *Саламлатпăр*



***Хаклăран та хаклă çыннăмăрсене – Çĕрпӳ районĕнчи Мамликасси ялĕнче пурăнакан, Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнче нумай-нумай çул ĕçленĕ Елизавета Яковлевна ИНОХОДОВĂНА – 65 çулхи юбилейпе тата Екатерина Валерьевна ИНОХОДОВĂНА 31 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Чир мĕнне пĕлмесĕр 100-е çити пурăнма çирĕп сывлăх, тулли телей сунатпăр.***

***Саламлаканĕсем: Ольга Порфирьевна, тăванĕсем, ачисем, ял-йыш.***

## *ПУЛĂШУ УСЛУГИ*

**36.Известный чебоксарский экстрасенс, хиромант** – сниму порчу, поставлю защиту, помогу в решении семейных и финансовых проблем. Т. 89063808628.

**38.ЧИСТКА КОЛОДЦЕВ.** Т. 8-961-342-90-59.

**45.Лечение алкоголизма, табакокурения.** Т.: 89030662902, 89276673368. *Лиц. 5001001230 от 08.06.2007. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**46.Бурение** колодцев, **углубление; продажа** и **д-ка** ж/б колец. bur.21.ru. Т. 89053434207.

**51.Бурение** колодцев, скважин; **кольца** колодезные высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 89373790080.

**57.Свадьбы, юбилеи** – тамада, диджей, «Уяв». Т. 89373756378, Мила.

**77.НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ** за 1 день. Т. 8-937-397-24-42.

**90.Бурение скважин** на воду «под ключ». Т. 8-987-576-65-62.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

**246.Бурение скважин на воду.** Чистка старых скважин. Т. 8-906-381-60-37.

**258.Бурение скважин на воду.** Тел. 8-960-301-25-13.

**259.Бурение скважин на воду.** Тел. 8-927-991-66-99.

**269.Утепление домов – ЭКОВАТОЙ.** Профессиональный монтаж. Летние скидки. Т. 89196691666.

**278.Кровля, обшивка** сайдингом, **утепление.** Т. 89176500640.

**314.Бурение колодцев. Продажа** к/колец. Т. 89276670803.

**406.Строительные работы** – от фундамента до кровли. Недорого. Качественно. Т. 89196534368.

**577.Бурение скважин на воду.** Т. 8-961-348-62-53.

**597.Бурение скважин.** Т.: 8-962-321-17-80, 21-17-80.

**599.Строительство,** ремонт, **отделка** любой сложности; заборы, **стройматериалы.** Пенсионерам **скидки.** Т. 89276679397.

**600.Натяжные потолки.** Дешево. Отделка. **Пенсионерам скидки.** Т. 8-927-666-54-04.

**604.Козырьки, навесы.** Т.: 28-97-98, 8-917-650-06-40.

**617.Бурение колодцев, скважин.** Т.: 89674703824, 89279905481.

## *ĔÇ РАБОТА*

**54.МОНОЛИТЧИКИ** в г. Йошкар-Ола. Куб. – 2500 руб. Жилье, питание. Т. 89176737773, 89625997773.

**297.Требуются каменщики, монолитчики** в Москву. Оплата своевременная. Т. 8-962-321-70-11.

## *ТУЯНАТĂП КУПЛЮ*

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.
**28.Вăкăр,** ĕне, **тына, сысна амисем.** Т. 8-927-999-37-37.
**39.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.
**50.Коров.** Т. 89278508564.
**108.Тёлок, коров.** Т. 8-937-014-49-97.
**403.КРС** – по высоким ценам. Т. 8-906-132-76-04.
**562.Коров, бычков, лошадей.** Т. 8-961-345-05-28.
**563.Бычков, телок, коров** и лошадей. Т. 8-967-794-92-82.

## *С У Т А Т Ă П  П Р О Д А Ю*

**1.Качественную** фабричную **МЕБЕЛЬ** по доступным ценам: стенки, прихожие, шкафы, комоды, столы, кровати. Доставка, сборка. Скидки, рассрочка. Салон «Express Комфорт»: м-н «Экспресс»; вещ. рынок «Ярмарка»; МТВ-Центр – 4-й эт.; «Северная» ярмарка Т.: 46-55-44, 8-953-899-82-24. **Сайт:** www.ex-comfort.ru.

**2.АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ,** пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 28 руб., 9х20х40 – 24 руб. Высокое качество. Доставка манипулятором. **Т. 8-967-470-46-77.**

**3.АКЦИЯ! ПЕСОК, ГРАВМАССУ,** щебень, керамзит. По низким ценам. Доставка. **Т. Т. 8-967-470-46-77.**

**4.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер. Доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.БЛОКИ** керамзитобетонные 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные, заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, **документы.** Т. 8-960-301-63-74.

**7.ГРАВМАССУ, песок, щебень, керамзит,** чернозём. Дёшево. Доставка. Т.: 8-903-358-17-70, 8-927-668-97-13, 38-97-13.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирп. бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Дёшево. Доставка. Т.: 8-903-358-30-21, 44-30-21.

**10.Сетку**-рабицу от производителя – более 80 видов, **сетку** сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, трубы профильные, водостоки, **металлосайдинг. Согнём** любые доборные элементы для кровли и фасада. Т. 44-44-33.

**15.Кирпич, БЛОКИ.** Т. 8-961-339-33-63.

**19.КИРПИЧ** красный, силикатный, **гравмассу,** щебень, **керамзит,** песок, кольца, **к/б блоки.** Т. 8-927-862-91-66.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-927-855-83-55.**

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ,** косилки, сажалки, **копалки,** окучники, **опрыскиватели.** Доставка. Т. 8-927-853-35-96.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **к/кольца.** Доставка. Т. 89033468556.

**27.Красноармейские КЕРАМБЛОКИ** – высококачественные, пропаренные /стеновые, перегородочные/, **сухие** строительные **смеси.** Доставка. Т. 89033220052.

**29.Картофелекопалки, косилки, грабли,** пресс-подборщики, **погрузчики,** доильные аппараты. РАСПРОДАЖА! ДОСТАВКА! Т.: 89373758095, 89379559802.

**30.Гравмассу, песок,** щебень, **керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**31.Гравмассу, песок, керамзит,** кирп. бой. Д-ка. Т. 89033225766.

**33.Кирпич** рядовой, лицевой; **керамблоки, кольца.** Доставка. Т.: 89063804835, 89276674605.

**34.Гравмассу,** песок, **щебень.** Услуги крана. Доставка до 25 тн. Т.: 89176500385, 89603073399.

**35.**Пластиковые **ОКНА,** металлические **ДВЕРИ.** Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. **Рассрочка.** Скидки. Т. 8-937-391-39-91.

**37.Ворота,** калитки, заборы, навесы. Ковка, **кровля,** обшивка сайдингом. Общестроительные и сварочные работы. Замер. Д-ка. Установка. Гарантия. **Пенсионерам – скидки.** Т.: 89022881447, 387574, metalservis21.ru

**40.ПИЛОМАТЕРИАЛ** /хвоя, береза, дуб, липа, осина/, **срубы, дрова, горбыль.** Т. 8-903-389-14-00.

**41.Гравмассу, гравий, песок** речной, карьерный; **щебень,** керамзит. Д-ка. Т. 89278404595.

**42.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40, **кольца колодезные** - диам. 1,5 м; 1 м; 0,8 м; 0,7 м; 0,45 м. Доставка. **Бурение.** Т.: 8-987-666-41-40, 8-937-010-01-41.

**49.Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках – цены от производителя. Т. 89053447932.

**56.ПЛИТЫ ТРОТУАРНЫЕ, БРУСЧАТКУ.** Т. 8-903-358-77-72.

**58.Гравмассу, щебень, песок, керамзит,** бетон, чернозём. Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**66.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень,** асфальтовую крошку, чернозём. Уч. ВОВ и пенсионерам – скидки. Т. 89176769379.

**67.БЛОКИ** керамзитобетонные, **тротуарные плиты, песок.** Доставка. Тел. 8-917-676-27-37.

**75.Дымоходные трубы** из нерж. стали. Аргонная сварка, медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

**76.Срубы** с комплектацией "под ключ". **Липовые срубы** – на заказ. Доставка. Т. 89379528467, Владимир.

**93.Кирпич красный** одинарный, полуторный, силикатный, облицовочный /все цвета/, половняк, **КББ** /20х20х40, 20х12х40/, **гравмассу,** керамзит. Доставка. Разгрузка кран-манипулятором. Т.: 44-20-97, 89033582097.

**120.ПЕНОПОЛИСТИРОЛ–ПЕНОПЛАСТ,** теплоизоляционный материал. **НИЗКИЕ ЦЕНЫ.** ДОСТАВКА. Прием заказов по тел. 8-917-078-99-45.

**123.Гравмассу, песок, навоз.** Доставка по старым ценам. Т. 8-927-850-28-21.

**154.ОКНА и ПОТОЛКИ** – немецкое качество. Монтаж по ГОСТу. Пенсионерам скидки. Рассрочка. Т. 89176627164.

**183.**Окна Чувашии. **ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, жел. двери.** Т. 89050281182.

**188.Гравмассу, песок, щебень.** Доставка. Т. 8-927-846-24-10.

**205.Цемент, песок, гравмассу,** щебень, **керамзит,** блоки. Д-ка. Т.: 89278497675, 89278497674.

**251.МЕТАЛЛОЧЕРЕПИЦУ,** профнастил, металлосайдинг, пластиковые окна. **Доставка,** замеры. **СТРОИТЕЛЬСТВО.** Т. 89196534368.

**270.Кольца колодезные** 0,7м, 1м, 1,5м. Д-ка. Установка. Т.: 36-26-23, 8-903-379-77-68.

**284.Канашскую гравмассу,** песок, щебень, грунт, навоз. Т. 8-909-302-09-58.

**285.Щебень, песок,** гравмассу, бой кирпича, навоз, керамзит. Доставка. **Услуги самосвала.** Т. 89656874887, Алексей.

**334.КОЛЬЦА от производителя** – 0,7м; 0,5м; 1м. Т. 89030654056.

**361.АКЦИЯ! КОЛЬЦА** железобетонные для колодцев и канализаций 0,7; 1; 1,5м. Бурение. Д-ка манипул-м. **Т. 8-967-470-46-77.**

**382.Гравмассу, песок** /карьерный, речной/, **щебень, керамзит,** чернозём. Недорого. Т. 89370161122.

**409.Гравмассу,** песок, **керамзит, щебень,** навоз. Т. 89278556552.

**464.Гравмассу, песок, щебень,** чернозём. Д-ка. Т. 89603098191.

**465.Гравмассу, песок, щебень,** чернозём. Д-ка. Т. 89093054261.

**555.БЕТОН.** Д-ка. Т. 89373827353.

**571.Пластиковые ОКНА,** межкомнатные и стальные **ДВЕРИ.** Дёшево. Гарантия. **Т. 89023282583.**

**594.Немецкие окна и двери.** Замер, доставка – БЕСПЛАТНО. Пенсионерам СКИДКИ! Т. 89278447811.

**596.ТЕПЛИЦЫ** по ценам производителя. Доставка. Сборка. Т. 48-16-54.

**598.Профнастил,** металлочерепицу, мягкую **кровлю,** заборы, сайдинг. Монтаж. **Строительство.** Т. 89876609394.

**605.Овец, ягнят, баранов** романовской породы. Т. 89196529296.

**606.Месячных бычков** на откорм по 8000 руб. Доставка по ЧР. Т.: 89176641716, 89196690171.

**613.ЗЕРНО.** Доставка. Т. 8-905-027-28-19.

**615.ГАЗель-фермер** /изотермический фургон, 2006 г.в., в хорошем состоянии/ – 260 тыс. руб. Т. 8-966-105-10-37.

ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ
ХЫПАР
ИЗДАТЕЛЬСКИЙ ДОМ

Учредитель: Чăваш Республикин Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерствин “Хыпар” Издательство çурчĕ” Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ

КИЛ-ÇУРТ, ХУШМА ХУÇАЛĂХ

Çырăнмалли индекс: 54806

**Директор-тĕп редактор В.В.ТУРКАЙ**
**Редактор Э.Н.ИВАНОВА**

**РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ:**
428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, III хут, “Кил-çурт, хушма хуçалăх”.
**ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ:**
56-15-30, 56-00-67.
**коммерци дирекцийĕ:**
28-83-70,
56-20-07 – инспекторсем.

**Факс:** /8352/ 28-83-70.
**Электронлă почта:**
hypar@mail.ru

hypar2008@rambler.ru
hyparkd@mail.ru

**Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службинче /Роскомнадзор/ 26.04.2013 ç. ПИ ФС77-53799 №-пе регистрациленĕ.**

26.08.2015. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла. 16 сехетре алă пуснă.

**Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.**

Тираж 15668. Заказ 3303.